Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

98-99 (8059-8060) №№ * Шăмат кун, 2012 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 15-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

# «Чăвашла калаçма та вĕренсе пыратăп»

*Кăçал Чăваш Енре «Земство тухтăрĕ» программа пурнăçланнипе ялсенче вырнаçнă сывлăх сыхлав учрежденийĕсенче çамрăк врачсем ĕçлеме тытăнчĕç. Программăпа килĕшӳллĕн ялта вĕсен пилĕк çултан кая мар ĕçлемелле.*

*Муркашри районти тĕп больницăна та çичĕ çамрăк врач килчĕ. Вĕсенчен пĕри – эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Николай Александрович Григорьев травматолог врач. Шупашкарта çуралса ӳснĕскер, кăçалхи мартранпа Муркашра вăй хума тытăнчĕ. 2010 çулта Чăваш патшалăх университетĕнчи медицина факультетне, тепĕр çулталăкран интернатура пĕтернĕ хыççăн Николай Александрович Шупашкарти хула клиника больницинче ĕçленĕ. Патшалăх программипе усă курма шутланăран вăл алла илнĕ специальноçпа ĕçлеме Муркашри тĕп больницăра вырăн пуррине пĕлсе пирĕн района çул тытнă.*

*– Çак пулăшупа усă курса пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатрăм. Мана кунта ĕçлеме килĕшет. Чăваш чĕлхине хăнăхса илтĕм ĕнтĕ, чăвашла калаçма та вĕренсе пыратăп. Малалла та хаваспах ĕçлеме хатĕр, – тăтăклăн пĕлтерчĕ çамрăк врач.*

**Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

«Земство тухтăрĕ»



Раççейре

## Президент Çырупа тухнă

Декабрĕн 12-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов Мускавра Кремлĕн Пысăк керменĕн Георгиевски залĕнче Раççей Президенчĕ Владимир Путин Раççей Федерацийĕн Федераллă Пухăвне яракан Çырăва вуласа панипе çыхăннă церемоние хутшăнчĕ.

В. Путин хăйне РФ Президентне тепĕр хут суйланă хыççăнхи пĕрремĕш Çырăвĕнче çĕр-шыв аталанăвĕн малашлăхĕпе çыхăннă пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусем çинче чарăнса тăнă. «XXI ĕмĕрте тĕнчере экономика, цивилизаци, çар хăвачĕ çĕнĕлле шайлашнă май Раççейăн суверенлă тата витĕмлĕ çĕр-шыв пулмалла. Пирĕн шанчăклă аталанмалла кăна мар, наци тата ăс-хакăл тĕлĕшпе хамăрăн уйрăмлăха упраса хăвармалла, наци пулса упранса юлмалла. Раççей пулса юлмалла», – тенĕ çĕр-шыв пуçлăхĕ.

Раççей Президенчĕ çĕр-шывра, федерацин кашни субъектĕнче пайăррăн демографи лару-тăрăвĕ лайăхланнине, çынсен пурнăç тăршшĕ вăрăмланнине палăртнă. «Çĕр-шывăмăрăн çĕнĕ историйĕнче пуçласа пилĕк уйăх хушши халăх йышĕ хăй тĕллĕн ӳссе пынине куратпăр: ачасем çуралассин шайĕ тинех çынсем вилессинчен ӳсрĕ», – тенĕ Владимир Путин.

## Юбилейсен уявĕ

РФ Президенчĕ В. Путин кăçалхи утă уйăхĕн 28-мĕшĕнче Раççей Правительстви 2019 çулта Шупашкар хулине никĕсленĕренпе 550 çул, 2020 çулта Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине çĕршыв шайĕнче палăртма сĕннине йышăннă, пысăк пĕлтерĕшлĕ юбилейсен уявне ирттерессиe çинчен калакан Указа алă пуснă.

Раççей премьер-министрĕ Д. Медведев юбилейсен йĕркелӳ комитечĕн йышне çирĕплетнĕ. Ăна РФ культура министрĕ В. Мединский ертсе пырать, унăн çумĕ – Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М. Игнатьев.

Вырăнти хăй тытăмлăх

## Лавĕ пĕрре, кӳлĕнес пулать пĕрле

***Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев вырăнсенче çĕрпе тĕллевлĕ, пĕлсе усă курасси çине уйрăмах пысăк тимлĕх уйăрать. Ыт ахальтен мар. Мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра çĕр пайĕсемпе, арендăна илнĕ çĕр участокĕсемпе палăртнă йĕркепе усă курассинче, вĕсемшĕн тӳлессинче çитменлĕхсем тăтăшах тĕл пулаççĕ. Çавăнпа та Хорнуй ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Манефа КОЛЕСНИКОВĂПА тĕл пулнă май малтанах çĕрсемпе усă курассин ыйтăвĕнех хускатас терĕм.***

**– Манефа Валериановна, сирĕн ял тăрăхĕн территорийĕнче çĕр участокĕсемпе усă курассин ыйтăвĕн актуаллăхĕ еплерех-ши?**

– Тӳрех палăртса хăварнă пулăттăм. Ку енĕпе ыйтусем çук мар. Çĕр пайĕсенех илер. Вĕсене пĕтĕмпе 812 виçсе панă. Вăл шутран патшалăх регистрацийĕ витĕр тухса участоксене харпăрлăха кусарнисем 200 кăна. Усă курман çĕр пайĕсем 499. Вĕсен спискине хаçатра пичетлесе кăларнă ĕнтĕ. Сывăх вăхăтрах суд йышăнăвĕпе ку çĕр пайĕсене ял тăрăхĕн муниципаллă харпăрлăхне куçарăпăр.

Çавăн пеккисем те пур. Хăшĕсем çĕр участокĕсемпе хăйсем те усă курмаççĕ, харпăрлăха куçарма та васкамаççĕ, малашне вĕсемпе усă курас марри пирки заявлени çырма та тăхтаса тăраççĕ. Çавăнпа та кун пеккисене хăвăртрах йышăну тума, çĕр участокĕ кирлĕ мар пулсан ун пирки ял тăрăхĕн администрацине е Росреестрăн районти пайне кайса заявлени çырма сĕннĕ пулăттăм.

**– Çулталăк вĕçĕ – пĕтĕмлетӳ, анализ тумалли вăхăт. Çавна май кăçалхи бюджет пирки те сăмах хускатас килет. Паллă ĕнтĕ, унăн тупăшсен пайĕ интереслентерет. Ыйтупа самантсем çук-и ку тĕлĕшпе?**

– Кунта каллех çĕр ыйтăвĕ патне таврăнма тивет. Уйрăмах 60 сотка çĕр лаптăкĕсемпе усă куракансенчен аренда тӳлевĕ илсе пĕтерессипе шухăшлаттарать. Ăна 35 пин тенкĕ пуçтармалла пулсан, кăтарту çуррине те çитмен-ха.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

# Республика Пуçлăхĕ çулталăка пĕтĕмлетрĕ

Пресс-конференци

***Çулталăка майĕпен вĕçлесе пыратпăр. Апла пулсан ку таранччен пурнăçланине тишкерме тата хаклама сăлтав пур. Çавна май декабрĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш наци музейĕнче анлă пресс-конференци ирттерчĕ. Унăн ĕçне федераци тата республика шайĕнчи çирĕм пилĕк массăллă информаци хатĕрĕсен хĕрĕхе яхăн журналисчĕ хутшăнчĕ.***

**РЕСПУБЛИКА ÇИРĔППĔН МАЛАЛЛА УТАТЬ**

– Хисеплĕ журналистсем, эсир Раççей, республика шайĕнчи пĕтĕм ĕçхĕле тĕрĕс хаклатăр, кирлĕ информацие туллин тата вăхăтра çынсем патне çитеретĕр – ку чи пĕлтерĕшли. Тĕрлĕ указ, хушу, çавăн пекех ытти хыпар кая юлни хăйĕн пахалăхне, пĕлтерĕшне çухатать. Çавăнпа та эсир патшалăх влаçĕпе, муниципалитет органĕсемпе тачă çыхăнса ĕçлетĕр, тĕп пулăшуçăсем пулса тăратăр. Пысăк тав сире!

Пĕтĕмĕшле илсен вара Чăваш Республики иртсе пыракан çулталăка лăпкă лару-тăрури ӳсĕмлĕ кăтартупа вĕçлет. Çакăн тĕрĕслĕхне макроэкономика динамики те çирĕплетет, ăна массăллă информаци хатĕрĕсенче тăтăшах çутатнă.

Раççей Федерацийĕнче Чăваш Республики çирĕп вырăн йышăнать. Чылай сферăра пире тĕслĕхе лартаççĕ. Тĕрлĕ енĕпе пилотлă республика пулнă май, кунта çĕнĕлĕхсем пуçласа вăй илеççĕ. Палăртмалла, пĕтĕм условие пурнăçлани, ӳстерни – çынсен хăтлăхĕшĕн тата тăнăçлăхĕшĕн. Ку вăл Раççей Федерацийĕн Президенчĕ В. Путин пирĕн ума, çавăн пекех эпĕ сирĕн ума лартнă чи пысăк тĕллев. Пуш сăмах маррине çирĕплетекенни вара çак критери – Чăваш Енре пурăнакансен сывлăх шайĕ ӳсме тытăнни тата демографи лару-тăрăвĕ тăнăçланни. Республикăра юлашки 20 çул хушшинче пĕрремĕш хут халăх йышĕ ӳснине палăртрăмăр, çакна 1000 çын пуçне ӳсĕм + 0,7 пулнипе ăнланмалла. Иртнĕ çул ку кăтарту -0,7-пе танлашнăччĕ. Ку критерие эпĕ çирĕп позицин тĕп тĕшшине куратăп. Эпĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ пулнă май, демографири е пурнăç шайĕнчи çакăн пек лару-тăрăва малашне те сыхласа хăварасса шанатăп. Çак шайлашулăхри тĕп ене вара эпĕ социаллă çăмăллăхсенче – нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕпе тивĕçтернинче, республикăн амăш капиталне уйăрнинче, çавăн пекех ытти хушма ĕçсем вăя кĕртнинче – куратăп. Республикăри хĕрарăмсен те, арçынсен те пурнăç тăршшĕн вăтам виçи Раççейри вăтам кăтартуран пысăк.

Раççей Федерацийĕн бюджетĕнчен республика пурнăçланă тĕрлĕ ĕçе хакланă май 150 миллион тенкĕ укça уйăрнă, ку вăл эффективлăха кура хавхалантару шучĕпе. Апла пулсан Раççейре Чăваш Ен ĕçне чăннипех те кураççĕ тата хаклаççĕ. Республикăн пĕтĕмĕшле ӳсĕмĕ вара çакăнтан та курăнать. Иртнĕ çул регионсен пĕтĕмĕшле ĕç эффективлăхне хакланă май Раççей шайĕнче Чăваш Ен малти пилĕк регион шутĕнче пулчĕ. Çавна май республика 84,5 миллион тенкĕне тивĕçрĕ. Çакăнта шăпах регионсен ĕç-хĕлне социаллă ыйтусемпе те хакланă. Регионa килнĕ хушма укça-тенкĕне каллех çынсен пурнăç шайне ӳстерме, бюджет сферинче вăй хуракансемшĕн усă курнă. Республика тĕрлĕ машина-агрегат туса кăларассин центрĕ шутланать, çавна май вăл ытти регионсене хатĕр продукципе тивĕçтерет. Çакă – хушма ĕç вырăнĕсем, бюджета пыракан хушма укçа тата ытти те, – терĕ республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев çулталăкри ĕç-хĕле тишкернĕ май.

2010 çул вĕçĕ Чăваш Еншĕн уйрăмах йывăр пулчĕ – пĕтĕм ăнăçсăрлăх капланчĕ. Республикăн патшалăх парăмĕ 10 миллиард ытла тенкĕпе танлашнă. Ĕç укçи тӳлессипе ĕçлекен пĕр çын пуçне тивекен парăм 307, 4 тенкĕ пулнă. Чăваш Ен япăххисен шутĕнче пилĕккĕмĕш вырăн йышăннă. Ĕç укçи тĕлĕшпе парăмсене пĕтерессипе прокуратура ĕçчĕнсене те явăçтарма тивнĕ. Халĕ ку енĕпе шайлашуллă лару-тăру.

Ĕç укçи калăпăшĕпе малтанхи çулсенче Чăваш Ен Атăл çи федераллă округри 14 регион хушшинче 12 вырăнта тăратчĕ, ăнăçсăррисенчен пĕриччĕ. Халĕ пĕр уйăхри вăтам ĕç укçи калăпăшĕ 16 пин те 618 тенкĕпе танлашать, ку кăтарту лайăххисенчен пĕри. Бюджет тытăмĕнче вăй хуракансене хушма хавхалану кĕтет, декабрьти черетлĕ ӳсĕм те куç умĕнче. Иртсе пыракан çулталăкра кăна учительсен ĕç укçи 40 процент хăпарчĕ. Воспитательсен ĕç укçине 24 процент чухлĕ ӳстерме палăртнă. Çапла вара асăннă категорин ĕç укçи калăпăшĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан сферăри вăтам ĕç укçин 80 процентне танлашмалла. Çак ĕç валли республика бюджетĕнчен 17 миллион тенкĕне яхăн уйăрма палăртнă. Çапах та ĕç укçин калăпăшне хăпартма пултарнине республика макроэкономикин ӳсĕмĕпе çыхăнтармалла.

**ТĔП ВЫРĂНТА – ÇЫНСЕН ИНТЕРЕСĔСЕНЕ ХӲТĔЛЕССИ**

Çынсен интересĕсене хӳтĕлесси тĕп вырăнта пулнине шута илсе республикăра социаллă бюджет ĕçлет. Пĕтĕмĕшле тăкаксен 70 процентне яхăн социаллă ĕç тĕллевĕпе усă кураççĕ.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)

Çырăнтару – 2013

## Шутлă кунсем юлаççĕ

**Хаклă вулаканăм! «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2013 çулхи январьтен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Вăхăт васкатать, çырăнтару кампанийĕ вĕçлениччен шутлă кунсем юлаççĕ. Çавăнпа та çак кунсенчех почтальонсемпе тĕл пулма тăрăшăр.**

**«Çĕнтерӳ ялавне» ултă уйăха çырăнмалли хак – 204 тенкĕ. Çитес çул та пĕрле пулар!**

**Райхаçат редакцийĕ.**

# Вырӑнти хӑй тытӑмлӑх: Хорнуй ял тӑрӑхĕ

## Лавĕ пĕрре, кӳлĕнес пулать пĕрле



***Кĕске справка:** М. Колесникова 1969 çулта çуралнӑ. 1992 çулта Чӑваш патшалӑх педагогика институтне вĕренсе пĕтернĕ, 2010 – 2011 çулсенче патшалӑх службин Атӑлпа Вятка академийĕнче вĕреннĕ. 1992 çулта Хорнуй шкулĕнче учительте ĕçлеме пуçланӑ. 2002 çултанпа – асӑннӑ шкул директорĕ. 2009 çулта çĕр кадастрĕн палатинче инженерта ĕçленĕ. 2010 çулта ӑна Хорнуй ял тӑрӑхĕн пуçлӑхне суйланӑ.*

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

Уйрӑм çынсенчен пурлӑхшӑн налук пуçтарасси те йĕркеллех пулса пымасть. Палӑртнӑ 49 пин тенкĕрен çурри ытларах кӑна пуçтарӑннӑ.

Пĕтĕмĕшле вара ял тӑрӑхĕн бюджетне 2012 çул валли тупӑшсем енĕпе 3176,6 пин тенкĕ, тӑкаксемпе – 3470,3 пин тенкĕ палӑртса хӑварнӑччĕ. Бюджет дефицичĕ 293,7 пин тенкĕ. Хамӑрӑн илмелли тупӑш планĕ 515,6 пин тенкĕ. Çулталӑк вĕçлениччен вӑхӑт мĕн чухлĕ юлнине шута илсен ӑна пурнӑçлама пултарасси ыйтуллӑрах.

Çавна та палӑртса хӑвармалла. Района республика бюджетĕнчен трансфертсем уйӑрасси малашне чаксa пырать пулсан, пире «çӳлтен» уйӑрса парасси те ӳсессине кĕтме кирлĕ мар. Çавӑнпа та малашне хамӑр çине ытларах шанас пулать. Ял тӑрӑхĕн бюджетне тупӑшсем енĕпе ӳстерме май паракан пур мелсемпе те туллинрех усӑ курни питех те пысӑк пĕлтерĕшлĕ.

**– Манефа Валериановна, ял тӑрӑхĕсем пирки сӑмах пуçарсан газ, шыв, çул ыйтӑвĕсене хускатмасӑр май çук...**

– Пирĕн патра газ ыйтӑвне унччченхи çулсенчех татса панӑ ĕнтĕ. Ял тӑрӑхĕнчи 4 ялта пуринче те çут çанталӑк газĕпе усӑ кураççĕ. Ялсем патне асфальт сарнӑ çулсем çитернĕ. Кӑçал Шаптак ялĕнче çул юсассипе ĕçсем пурнӑçларӑмӑр. Анчах çакӑ çителĕклĕ теместĕп. Çулсем тӑвассипе тата юсассипе ĕçлемелли пурха. Шыв ыйтӑвĕ те кун йĕркинчех тӑрать. Ялсенче шыв пӑрӑхĕсене вуншар çул каяллах хурса хӑварнӑ. Час-час пӑрӑхсем шӑтса каяççĕ. Вĕсене вĕçĕм юсаса пӑхса тӑмах тивет. Хорнуйĕнче шыв пӑрӑхĕсене çĕнĕрен хывассипе проект документацине хатĕрлесе çитернĕ ĕнтĕ. Республика шайĕнчен укçа-тенкĕ уйӑрса парсан ку ĕçе пуçӑнма майсем пулаççĕ. Каласа хӑвармалла, хальлĕхе вара ку пулӑшу мелĕпе ытларах республикӑн кӑнтӑр районĕсене тивĕçтереççĕ.

**– Çĕнĕ урамсене электричество кĕртессин ятарлӑ программине хутшӑнатӑр-и?**

– Ку программӑпа ял тӑрӑхĕнчи 3 урама электрификацилеме пӑхнӑччĕ. Шаптак ялĕнчи Центральная урамра «Дуслых» ЗАО ку ĕçсене вĕçленĕпе пĕрех ĕнтĕ. Хорнуй ялĕнчи Козьмойская тата Новая урамсенче вара çак вӑхӑта çитсе те электричество юписем кӑна лараççĕ. Подрядчик – «СтройГрандГрупп» ООО хӑйĕн тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнӑçламасть. Çавӑнпа та малашне кунти ĕçсене ку подрядлӑ организациех пурнӑçлассине е ӑна улӑштарассине арбитраж сучĕ урлӑ татса памалла пулать.

**– Патшалӑх, республика, район шайĕнче саккунпа килĕшӳллĕн çӑмӑллӑхпа усӑ курма тивĕç çемьесене хӑйсен пурӑнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайӑхлатма майсем туса парассине пысӑк тимлĕх уйӑраççĕ. Сирĕн патра пур-и кун пек çемьесем?**

– Кӑçал çулталӑк пуçламӑшĕ тĕлне пурӑнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайӑхлатмаллисен черетĕнче 16 çемье шутланнӑ. Вӑл шутран нумай ачаллӑ тата Чернобыльти атом электростанцийĕнчи инкеке сирме хутшӑннин çемйисем пĕршер, вӑрçӑра вилнĕ салтаксен тӑлӑх мӑшӑрĕсем иккĕн, çамрӑк çемьесем вуннӑ тата икĕ çемье çурчĕсене пурӑнма юрӑхсӑррисен шутне кĕртнисем. Ку енĕпе 4 çемье патшалӑхӑн пулӑшу мелĕсемпе усӑ курчĕ ĕнтĕ.

**– Территорисене çӳп-çапран тасатас, тирпей-илем кĕртес ыйтусене мĕнле татса паратӑр?**

– Çавна валли бюджетра 62 пин тенкĕ пӑхса хӑварнӑ. Анчах та ытларах пайĕ ялсенчен полигона çӳп-çап турттарнӑшӑн тӳлеме тухса каять. Ытти çĕрти пекех, пирĕн патра та йӑла каяшне турттарса кайнӑшӑн ял çыннисенчен укçа пухасси йĕркене кĕреймест-ха.

Территорисене тирпей-илем кĕртессипе субботниксене, йывӑççем лартассипе уйӑхлӑхсене яланах хутшӑнатпӑр. Тойкилтĕ шкулĕнче вĕренекенсем, старостӑсемпе вырӑнти депутатсем тĕслĕх кӑтартаççĕ ку ĕçсенче.

**– Хӑшĕсене палӑртса хӑварас кӑмӑл пур вĕсенчен?**

– Пĕрлехи ĕçсене йĕркелесе пырассинче депутатсен районти Пухӑвĕн депутачĕ Александр Сидюшкин, вырӑнти депутатсенчен Светлана Матвеева, Сергей Николаев, Галина Павлова, Тамара Александрова, старостӑсенчен Алексей Михеев, Виктор Филиппов, Сергей Колесников, Игорь Сергеев, Маргарита Исакова, Нина Васильева пуçарулӑх кӑтартаççĕ. Хĕрарӑмсен, ĕçпе вӑрçӑ ветеранĕсен, пенсионерсен вырӑнти канашĕсен ĕçĕ-хĕлĕ те курӑмлӑ. Профилактика канашĕ те хӑйĕн ĕçне япӑх мар туса пырать.

Çавӑн пекех хресчен (фермер) хуçалӑх ертӳçи Александр Ванюшкин пирки те ыррине кӑна калама пултаратӑп. Ял çыннисене пулӑшассинчен нихӑçан та пӑрӑнса юлмасть, ĕç çи вӑхӑтĕнче çынсене ĕçпе те тивĕçтерет. Нумаях пулмасть «Путь Ильича» агрофирмӑн сĕт комплексĕн пĕрремĕш черечĕ хута кайрĕ.

Ял тӑрӑхĕн культура пурнӑçĕнче Тойкилтĕри Культура çурчĕн пĕлтерĕшĕ пысӑк. Кӑçалхи январьтенпе вӑл информаципе культура центрĕ пулса тӑчĕ. Дина Михеева ертсе пынипе кунта тĕрлĕ мероприятисем сахал мар ирттереççĕ.

Владимир Железнов ертсе пыракан «Хĕлхем» пултарулӑх ушкӑнĕ тата шкул ачисен «Хаваслӑ кĕвĕсем» эстрада ушкӑнĕ – ял çыннисен кĕтнĕ хӑнисем.

Çапла, пурнӑç пĕр вырӑнта тӑмасть, малаллах каять. Умри татса памалли ыйтусемпе пĕрлех хамӑр ĕçре ырӑ еннелле пулса иртекен улшӑнусем те çук мар. Вĕсем сулӑмлӑрах та курӑмлӑрах пуласси вара пурте пĕрле пулнинчен, пĕр ĕмĕт-тĕллевпе ĕçлесе пынинчен ытларах килет. Май килнипе усӑ курса вара пурне те çитсе килекен Çĕнĕ çул уявĕ ячĕпе саламлатӑп, пĕрлехи ĕçре ӑнӑçусем, ырлӑх-сывлӑх сунатӑп.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнӑ.**
**Автор сӑн ӳкерчĕкĕ.**

## Çĕнĕ комплекс – çĕнĕ ĕç вырӑнĕсем

***Кӑçалхи ноябрĕн 28-мĕшĕ пирĕн ял тӑрӑхĕнче пурӑнакансемшĕн уйрӑмах паллӑ кун, кунпа пĕрлех пысӑк уяв та пулса тӑчĕ. Çав кун ял тӑрӑхĕн территорийĕнче вырнаçнӑ «Путь Ильича» агрофирма» чикĕллĕ яваплӑхлӑ обществӑн нумай профильлĕ çĕнĕ агротехника комплексĕн 500 пуç выльӑх вырнаçмалӑх ĕне ферми хута кайрĕ.***

Унтах сĕт блокĕ те, ĕнесем пӑрулаттармалли уйрӑм та вырнаçнӑ. Фермипех хальхи çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнӑ, алӑпа пурнӑçламалли мĕн пур йывӑр ĕçе механизациленĕ.

Нумаях пулмасть ферма вырӑнĕнче пуш хир кӑна пулнӑ. Халĕ вара çак илем катаранах курӑнать. Каласа хӑварас пулать. Çакӑ вӑл пысӑк ĕçсен пуçламӑшĕ кӑна-ха. Комплекса пĕтĕмĕшле туса пĕтерсен кунта 1000 пуç таран выльӑх усрама тытӑнмалла.

Комплексӑн пĕрремĕш черетне хута янӑ ятпа ирттерекен савӑнӑçлӑ церемоние Чӑваш Ен Пуçлӑхĕ Михаил Игнатьев, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумĕ Сергей Павлов, ЧР Патшалӑх Канашĕн комитет председателĕ тата «Единая Россия» политика партийĕн регионти политканашĕн секретарĕ Николай Малов, «Россельхозбанкӑн» Чӑваш регионĕнчи филиалĕн директорĕ Ирина Письменская, ЧР Патшалӑх Канашĕн депутачĕ Николай Ванеркин, район администрацийĕн пуçлӑхĕ Ростислав Тимофеев, районти хуçалӑхсен ертӳçисемпе специалисчĕсем, çавӑн пекех агрофирмӑн генеральнӑй директорĕ Олег Дельман тата унӑн ашшĕ Александр Дельман хутшӑнчĕç.

Часах ӑратлӑ çамрӑк выльӑхсен тепĕр ушкӑнне илсе килме палӑртнӑ. Кайран вара комплекс тулли хӑватпа ĕçлеме тытӑнĕ. Апла пулсан çынсем валли ĕç вырӑнĕсем татах пулĕç. Вĕсем пур та ĕнтĕ.

## Культура пурнӑçĕнчи вырӑнĕ пысӑк

1952 çулта Тойкилтĕ ялĕнче вулав çуртĕнче уçӑлнӑ библиотека 60 çул хушшинче аталану çулĕпе çирĕппĕн утӑмласа пынӑ. Тĕрлĕ çулсенче библиотекӑна Нина Федорова, Антонина Ефимова, Виталий Петров, Клеопатра Романова, Евдокия Тихонова ертсе пынӑ. 1994 çултанпа заведующире Майя Николаева тӑрӑшать. Кашниех вĕсенчен çак библиотекӑна паянхи шая çĕклессипе хӑйĕн тӳпине хывнӑ.

1952 çулта библиотека фондĕнче 847 кĕнеке шутланнӑ, 5 экземпляр хаçат-журнал çырӑнса илнĕ. Библиотекӑна çӳрекенсем 162 çын пулнӑ.

1961 çултанпа библиотека Тойкилтĕри хальхи информаципе культура центрĕнче вырӑн тупнӑ. 2006 çулхи декабрĕн 13-мĕшĕнче вӑл тĕслĕх библиотека пулса тӑнӑ.

Тойкилтĕ библиотеки паян – хальхи информаципе культура центрĕ. Унта компьютер техники те вырнаçтарнӑ, Интернета та тухма пулать, тĕрлĕрен вĕренӳ программисем, вĕренӳре усӑ курмалли компакт-дисксем пур. Библиотека фончĕ çуллен çĕнĕ кĕнекесемпе, электронлӑ изданисемпе пуянланса пырать. Кирек хӑш ӳсĕмри çынсем те кунта хӑйсене кирлĕ информацие вӑхӑтра илме, кирлĕ кĕнекене тупма пултараççĕ. Хальхи вӑхӑтра библиотека услугисемпе усӑ куракансем 665 çын, тĕрлĕ кĕнекесемпе, документсемпе тивĕçтересси çулталӑкра 13624 экземплярпа танлашать.

Библиотекӑна çӳрекенсемшĕн «Медиатека» тата унӑн электронлӑ изданийĕсен пуян коллекцийĕ пысӑк хисепре. Библиотекӑра телевизор тата DVD-плеер пурри вара тĕрлĕ мероприятисене, вĕсен шутĕнче литературӑпа музыка каçĕсене, вулакансен конференцийĕсене, ача-пӑча утренникĕсене, çемье хутшӑнӑвĕсен каçĕсене илĕртӳллĕ те асра юлмалла ирттерме май парать.

Библиотека Тойкилтĕри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулпа тачӑ çыхӑну тытать. Библиотекӑра ачасен «Подсолнух» экологи клубне йĕркеленĕ.

18 çул ĕнтĕ Тойкилтĕ ялĕнчи библиотекӑна Майя Николаева ертсе пырать. Майя Анатольевна библиотекарь ĕçĕн ятарлӑ пĕлĕвне илнĕ. Шкул ачисемпе, ял çамрӑкĕсемпе, пенсионерсемпе вӑл куллен туса ирттерекен ĕçсен калӑпӑшĕ те, пĕлтерĕшĕ те пысӑк.

**Кӑларӑма В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

## «Пĕрремĕш утӑмсем халĕ те асрах»

1992 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Хорнуй ял Советĕнче ĕçлеме пуçӑннине халĕ те ас тӑватӑп. Ял Советне Чӑваш АССР Аслӑ Канашĕн Президиумĕн Указĕпе 1991 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче йĕркелерĕç.

Депутатсен Пухӑвĕ малтанах ял Совет председательне Валерий Микашкина суйларĕ. Ун чухне вӑл почта пуçлӑхĕччĕ. Вӑл мана ял Совечĕн счетовод-кассирĕ тата çар учечĕн сĕтелĕн специалисчĕ пулма ĕçе илчĕ.

Анчах та «çӳлти» пуçлӑхсем Валерий Ананьевича почта пуçлӑхĕнчен хӑтарасшӑн пулмарĕç. Çавӑнпа та депутатсен черетсĕр пухӑвне ирттерсе председателе Николай Петров депутата суйларĕç. Ун чухне вӑл Ленин яч. хис. хуçалӑхӑн партком секретарĕнче ĕçленĕччĕ. Тĕп бухгалтер Роза Магаева, секретарь Светлана Иванова пулнӑ. Çапла вара тӑваттӑн туслӑн ĕçе кӳлĕнтĕмĕр. Çулталӑкран секретарьте Маргарита Исакова ĕçлеме пуçӑнчĕ.

Малтанхи утӑмсем çӑмӑл пулман. Уйрӑмах çĕр ыйтӑвĕсемпе нумай ĕçлеме тиветчĕ. Ял Советне çавна валли кӑна туса хунӑ тесе те шухӑшлаттӑмӑр хӑш чухне. Кайран çĕр ыйтӑвĕсемпе ĕçлеме райĕçтӑвкомран тепĕр штат единици хушса пачĕç. Малтанах ку ĕçе С. Архипова тӑватчĕ, 1993 çултанпа Татьяна Никитина пурнӑçлама тытӑнчĕ.

Çĕрсене инвентаризацилес, ялсене газ кĕртес енĕпе ĕçлемелли пайтах пулнӑ. Депутатсем те ку ĕçрен айккинче тӑман. Уйрӑмах ун чухне Ленин яч. хис. хуçалӑх ертӳçинче вӑй хунӑ Леонид Николаев, хуçалӑхӑн склад заведующийĕ пулнӑ Анатолий Федоров, инженер-строителĕ пулнӑ Алексей Атласкин, Хорнуй шкулĕн учителĕ пулнӑ Владислав Смирнов, Тойкилтĕ шкулĕнче вĕрентнĕ Игорь Сергеев нумай тӑрӑшнӑ.

1996 çулта çĕр ĕçĕпе ĕçлекенсен штачĕсене пĕтерчĕç. Унччен илнĕ пĕлӳпе хӑнӑху малашнехи ĕçре те кирлĕ пулчĕ.

Эп ĕçленĕ хушӑра организаци ячĕ 4 хутчен улшӑнчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен ку пысӑк пĕлтерĕшлĕ пулнӑ пулĕ, анчах та пирĕншĕн çынсемпе ĕçлесси тĕп вырӑнта тӑнӑ. Экономикӑри тата политикӑри çĕнĕ задачӑсене кура пирĕн ĕç калӑпӑшĕ ӳссе пынӑ кӑна.

Н. Петров Хорнуй ял Совет председателĕнче ĕçленĕ çулсенче (1991 – 1999) Хорнуй ялне газ кĕртнĕ, ял çыннисен 50 проценчĕ çут çанталӑк газĕпе усӑ курма тытӑннӑ. 50 вырӑнлӑ «Аленушка» ача садне хута янӑ. Ленин яч. хис. хуçалӑхпа пĕрле Платкассинче ял клубне çĕкленĕ.

1999 çул вĕçĕнчен тытӑнса 2001 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен ял администрацийĕн пуçлӑхĕнче Геннадий Петров ĕçлерĕ. Март уйӑхĕнчен пуçласа ял администрацине Валентина Любимова ертсе пыма пуçларĕ. Ответлӑха туйса, чунне парса пурнӑçлатчĕ вӑл шаннӑ тивĕçе.

Шаптак ялне газ кĕртни аса килет. Ял администрацийĕн пуçлӑхĕнче Валентина Алексеевна пулнӑ ун чухне.

Шаптак ялĕнче актив пухрӑмӑр, граждансен пухӑвне ирттертĕмĕр. Шаптак тата Тойкилтĕ ялĕсене газ кĕртесси пирки В. Любимова тухса калаçрĕ. Ял çыннисем ырласа йышӑнчĕç ку сĕнĕве. Проект хатĕрлемелле пулчĕ. Халӑхран укçа пуçтартӑмӑр, проект хатĕрлерĕмĕр. Газ пӑрӑхĕсене Хусантан кӳрсе килтĕмĕр. Валентина Алексеевна йĕркелесе ертсе пыма пултарнипе, çак ĕçре ӑна ыттисем пулӑшса пынипе, ял çыннисем тӑрӑшнипе 2001 çулта проект хатĕрлерĕмĕр пулсан, 2002 çулхи декабрь уйӑхĕнче Шаптак тата Тойкилтĕ ялĕсенчи çынсен килĕсенче те «кӑвак çулӑм» çунма пуçӑнчĕ.

Çапла, вӑхӑт иртет, пурнӑç малаллах шӑвать. Иртни ерипен манӑçа тухса пырать. Малашлӑхпа пурӑнатпӑр. Апла пулин те юлашки икĕ вунӑ çуллӑх хушшинче хамӑр пурнӑçра пулса иртнĕ улшӑнусем манӑн асрах.

**20 çул ытла Хорнуй ял тӑрӑхĕнче вӑй хуракан Генриета ПЕТРОВА аса илĕвĕнчен.**

# «Надежда» центр сире яланах кĕтет

Психолог патĕнче




«Средне-Волжский Транснефтепродукт» акционерсен уçă общества кăçал пирĕн район çыннисемшĕн пысăк парне турĕ. Вĕсем ырă кăмăллăх шучĕпе çĕр пин тенкĕ укçа хывнипе Муркашри А. Николаев ячĕллĕ ача-пăча библиотекинче «Надежда» консультаципе методика центрĕ уçма май килчĕ. Пулăшупа тĕрĕс те вырăнлă усă курнинче район администрацийĕн, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн тӳписем пысăк. Центр ĕçе пуçăннăранпа вăхăчĕ нумаях та иртмерĕ, апла пулин те пулăшу кӳни курăмлă.

– Эпир ытларах шкул ачисемпе, çул çитмен çамрăксемпе ĕçлетпĕр. Çитĕнекен ăру шухăш-кăмăлĕ питĕ вылянчăк тата ăна кĕтмен çĕртен тухнă инкек часах амантма, çавна май тĕрĕс çултан пăрма пултарать. Кунта вара ачана вăхăтра пулăшни, ăна тĕрĕс çул кăтартни питĕ кирлĕ. Асăннă центрăн тĕп тĕллевĕ – йывăр лару-тăрăва лекнисене пĕччен-лĕхре хăварас марри, çавăн пекех вĕсемпе малтанхи тапхăртах профилактика енĕпе ытларах тимлесси, – тет кунти специалист Н. Казакова кулленхи ĕç-хĕлпе паллаштарнă май.

Йывăр шăпаллă çамрăксен, çемьесен ĕçĕсене район администрацийĕнче ятарлă комиссире пăхса тухаççĕ. Надежда Владимировна шăпах çак комисси членĕ, ку тĕлĕшри лару-тăрăва вăл аван пĕлсе-курса тăрать. Çавна май вĕсемпе кашнинпе тачă ĕçлеме тăрăшать. Хăш чухне вара çамрăксемпе кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕпе те калаçма тивет. Тепĕр тесен ача-пăча воспитанийĕшĕн чи малтан ашшĕ-амăшĕ ответлă вĕт. Тĕрĕс çулйĕртен пăрăннăранах йывăр лару-тăру килсе тухать те. Ку, паллах, ытларах чухне алкоголь продукцийĕн витĕмĕпе çыхăннă.

Чăн та йывăр самантра çумра ăнланма пултаракан çын пулни, унпа чуна уçса калаçни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Апла пулсан асăннă центра çул тытар. Кунта килти евĕр лăпкă та ăшă лару-тăру, çумра вара психолог е ытти специалист. Апла пулсан çыннăн чун-чĕре çумĕнчи хĕлĕхĕ таталнине те тӳрлетме пулăшаççех. Анчах та çакăнтан сыхланасчĕ, инкек-синкеке лекнĕ çын чунĕ тăваннипе хăй пурнăçне хура тĕспе ан сăрлатăрччĕ. Çак саманта çĕнтерме тата малашлăха шанăçпа пăхма пулăшаççех кунта тăрăшакансем. Тата йывăр самантра тăвата стена хушшинче кăна ларни пачах та çăмăллăх кӳмест. Кун пек чухне çын хушшине тухмалла, анчах та тĕрĕс çултан пăрăннисем патне мар. Çакă питĕ вылянчăклă самант.

– Эпир сире хамăр патра кирек хăçан та хапăл тăватпăр. Чунра йывăр чухне кунта килме ан именĕр. Эсир пирĕнпе калаçни, пулăшу ыйтни çакăнтах юлĕ, сирĕн чунăр вара сипленĕ, – терĕ Надежда Владимировна центра килме йыхравласа.

Палăртса хăвармалла, «Надежда» центр нихăçан та пушă лармасть. Кунта харпăр хăй шухăш-кăмăлне пайлас текенсем яланах тупăнаççĕ. Асăннă центра уйрăммăн кăна мар, класпа пĕрле те килеççĕ. Вĕсемпе кунта тĕрлĕ калаçусем, семинарсем, профилактика сехечĕсем, ытти мероприятисем йĕркелеççĕ. Акă «Сывă пурнăç йĕркишĕн» уйăхлăхра мĕнле кăна ĕç ирттермен пулĕ центрта. Çак ĕç шайне тĕрĕс апатлану пирки калаçни те кĕрет. «Надежда» центр ĕçĕ сывлăх сыхлавĕн, вĕрентӳпе çамрăксен политикин пайĕн, шалти ĕçсен тытăмĕн специалисчĕсемпе тата ыттисемпе пĕрле пурнăçланать. Кун пек чухне ĕç пахалăхĕ татах та ӳсет. Акă çак кунсенче кăна асăннă центр ĕçне республика шайĕнче тишкерчĕç, ăна ыттисем умне тĕслĕхе лартрĕç. Çавăн пекех кунти аталанупа республикăри культура ĕçченĕсем килсе паллашрĕç. Апла пулсан центр малашлăхĕ пурах.

Ман аллăма сĕнӳсен кĕнеки лекрĕ. Кунта килекенсем хăйсен шухăш-кăмăлне палăртнă, вĕсем кашниех тав сăмахĕ вырăнĕнче. Кĕнекере çапла çырнисене вуларăм. «Центр ĕçлени ачасемшĕн кăна мар, пирĕншĕн, учительсемшĕн те, питĕ кирлĕ. Çакăнта чăнах та урăхларах лару-тăру, ăнлану. Специалистпа ирттернĕ калаçусене хамăр уроксенче те усă куратпăр, сӳтсе яватпăр».

Йĕри-тавралла пăхарха, йывăрлăха лекнисене тимлĕхсĕр хăварар мар. Аманнă турата вăхăтра сиплесен вăл юсанатех, ăна пĕрре хуçса хурсан нихăçан та сыпăнмĕ, пурнăç вара пĕрре кăна килет.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Çĕнĕ çул умĕнхи асăрхаттару

# Теттесем хыçĕнчи хăрушлăх

Раштава кĕнĕ май телевидени передачисенче те ял-хуласенче Çĕнĕ çула хатĕрленни пирки хыпарсем ытларах та ытларах курăнаççĕ. Кашни кун иртмессерен урамсемпе çуртсем таврашĕнче электричество гирляндисем йышланнăран пурте сисетпĕр, Çĕнĕ çул çывăхрах та çывăхрах. Кунпа пĕрлех хамăр сисмесĕрех кашниех унран асамлăх кĕтсе ăна анлă уявлама хатĕрленетпĕр. Çĕнĕ çул вăл – политикăн нихăш енне те пырса тивмен уяв. Çавăнпах ăна пурте пĕр йышра уявласси халăхăн йăлинче çирĕп никĕсленнĕ. Çак уява туллин кĕтсе илесси те халăхра пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çак самант ытларах асра юлтăр тесе ĕç коллективĕсенче уява паллă тума тăтăшах çĕнĕлĕхсем кĕртеççĕ, елкăна электричествăн илемлĕ çутипе, тĕрлĕ çуртасемпе капăрлатаççĕ, савăнăç хăтне анлăлатма пиротехника изделийĕсемпе ытлă-çитлех усă кураççĕ. Халĕ каланине шута илсе шăпах çак тапхăр пушар тухаслăх тĕлĕшпе пысăк хăрушлăх кăларса тăратать те. Çакна эпир тăвакан çулленхи тишкерӳсем те çирĕплетеççĕ. Пĕтĕмлетсе калатăп, уявсенчи пушарсенче шăпах илĕртӳллĕ пиротехника изделийĕсем малти вырăна тухаççĕ.

Пытарма кирлĕ мар, паянхи рынок пиротехника изделийĕсенчен питĕ пуян. Вĕсем хушшинче иккĕленӳллĕ производство продукчĕсем те çук мар. Çавăнпа та хамăр енчен ку вăхăтра çирĕп тĕрĕслевсем йĕркелетпĕр. Шăпах иккĕленӳллĕ пиротехника изделийĕсене туянакан уяври савăнăç кĕрекине хăрушлăх илсе çитерет те. Кунпа пĕрлех пиротехника хатĕрĕсене ачасене шанса пани те инкеке анлă çул уçни тесе калас килет. Пиротехника хатĕрĕсен хăрушлăх факторĕсем: вĕсен кусăмĕн кинетика энергийĕ, сирпĕнес вăйĕ тата ванчăксем инçете сапаланас туртăмĕ т. ыт. те.

Тавар туянаканăн малтанах çакна пĕлмелле. Пиротехника хатĕрĕсене ваккăн сутма суту-илӳ залĕллĕ магазинсемпе павильонсенче кăна ирĕк пур е куçарса çӳремелли ятарлă киосксенче.

Асăннă препаратсемпе сутă тăвакансене паян çакна асăрхаттаратăп: сутăва кăларакан пиротехника хатĕрĕсене упрама ятарлă пӳлĕмсем кирлĕ. Вĕсемпе усă курассине тата унта мĕн чухлĕ пиротехника хатĕрĕ упрасси пирки вырăнти патшалăх пушар надзорĕн органĕсемпе килĕшсе таталмалла. Юрăхсăра тухнă пиротехника хатĕрĕсен уйрăм вырăнта упранмалла.

Кашни пиротехника изделийĕпе пĕрлех (ваккисене валли – кашни упаковкăрах) унпа епле усă курмаллине вырăсла çырса ăнлантарнă инструкци пулмалла. Вĕсемпе сутă тунă вырăнсенче çак хатĕрсене ĕçлеттерсе тĕрĕслесси практикăра пулмалла мар.

Кĕскен каласан, Çĕнĕ çул фейерверкĕ савăнăç çеç илсе килтĕр тесен пасарсенче е ют çынран иккĕленӳллĕ пиротехника хатĕрĕсем тархасшăн ан туянăр. Туяннисемпе усă курма пуçличчен вĕсен инструкцийĕсемпе тĕплĕн паллашăр.

Çывхаракан Çĕнĕ çул кашни киле савăнăç çеç илсе килтĕр!

**А. ИЗОНОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти уйрăмĕн ертӳçи.**

Культура ыйтăвĕсемпе

# «Юрă çĕклет чун-чĕрене»

Паян ялсен аталанăвĕ пирки тĕрлĕ шайра шанчăк çуратакан калаçусем иртеççĕ. Вĕсен никĕсĕ çинче ялта пурăнаканăн тата çĕр ĕçĕнче вăй хураканăн пурнăçне лайăхлатма, ĕç условийĕсене çĕнетме ыранхи куна шантаракан программăсем çуралаççĕ. Çак ырă туртăм Раççей Федерацийĕн шайĕнчи пекех Чăваш Республикинче те, Муркаш районĕнче те сисĕнет. Хăйĕн пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнисен вара çĕр ĕçĕпе ĕçлесех тата выльăх-чĕрлĕх пăхсах ĕмĕре ирттермелле мар вĕт-ха. Вĕсене чун çимĕçĕ те çителĕклĕ кирлĕ. «Пĕр çăкăрпа çеç тутă пулаймастăн», – тенĕ малашлăха тинкерсе мăн асаттесемпе асаннесем. Çак чăнлăх çулсем иртнĕ май нимĕн чухлĕ те улшăнмасть. Ăна эпир ял пурнăçĕн кашни утăмĕнче курса тăратпăр.

Шкул ачисем тăван халăх историйĕпе культурине лайăххрах пĕлччĕр тесен музыка урокĕсенче тĕрлĕ темăсемпе усă курса ĕçлемеллине лайăх ăнланаççĕ вĕрентекенсем. Халăх юрри-кĕввинче пысăк вăйпа аталану туйăмĕ пуррине паян шкулти кашни музыка учителĕ ăнланать. Пулас ăрăва çакă мĕнле витĕм кӳрет-ха? Атте-аннесемпе асаттеасаннесен юрри-кĕвви кашни ачана хăй чăваш пулнине тата наци пахалăхне туйма, характерне çирĕплетме пулăшать. Çакă пулас ăрăвăн çулне уçни пирки те иккĕленӳ çук. Çакна нумаях пулмасть Турайри вăтам шкулта иртнĕ районти музыка учителĕсен методика пĕрлешĕвĕн ĕçĕ-хĕлĕ те кăтартса пачĕ. Кунта Турайри вăтам шкулта вĕренекенсемпе кĕвĕ урокĕсем ирттерекен Калерия Албутова 8-мĕш класра уçă урок пачĕ. Калерия Ивановна кунпа пĕрлех çав кун шкул ачисемпе тата вĕрентекенсемпе Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕпе, паллă композиторпа Юрий Жуковпа тĕл пулу ирттерни те кашнийĕнех асра юлчĕ. Унăн пултарулăхĕпе тата пурнăçĕпе тарăнрах паллашса шкул ачисен музыкăпа эстетика туйăмне ӳстерес тĕллев тĕп вырăнта пулчĕ.

Композитора халалланă уява хĕр ачасен ушкăнĕ «Чечеклен, юратнă Чăваш Ен» юрăпа пуçларĕ. Ю. Жуков кĕвĕленĕ юрă тĕл пулăва уçса залра илемлĕн янăрарĕ. Унтан ачасем Юрий Нестеровичăн пурнăç çулĕпе, унăн пултарулăхĕпе тĕплĕн паллашрĕç тата паллаштарчĕç. Хăйсене композиторпа çыхăннă тĕрлĕ ыйтусем кăсăклантарнăран ачасен ыйтăвĕсем те пĕри тепринчен интереслĕрех пулчĕç. Ачасем хускатнă ыйтусем çине пултаруллă ентеш туллин те уçăмлăн хуравларĕ. Кунта хăш-пĕр юрăсен историйĕ ачасемшĕн те, вĕрентекенсемшĕн те кăсăклă пулнине пытарма çук.

– Мĕнле çуралать-ха кĕвĕ? Хăш вăхăтра çырăнать илемлĕ юрă? – пулчĕ пĕр ыйту.

– Ăшран, чунтан тухать вăл. Сăвă содержанийĕнчен те пулас юрăн пурнăçĕ нумай килет, – хуравларĕ композитор. – Паллах, кĕвĕ тытăмне вĕренмесĕр, юрра туйма пĕлмесĕр, Турă пани пулмасăр çавăн пек илемлĕ юрăсем çуралмĕччĕç те пулĕ. Тавах куншăн атте-аннене, хама вĕрентекенсене тата паян сăвăпа тивĕçтерекен поэтсене.

Ăшă кăмăлпа иртрĕ тĕл пулу. Ю. Жуков кĕвĕленĕ тĕрлĕ юрă нумайччен янăрарĕ уявра. Ачасем те, вĕрентекенсем те тулли кăмăлпа шăрантарчĕç унăн юррисене. Композиторпа пĕрле юрлама тӳр килнишĕн пурте савăнчĕç:

«...Юрă çĕклет чун-чĕрене,
Çунат парать ĕмĕтсене».

Пирĕн тăрăхра çакăн пек чаплă композитор пулни чăн та чуна çĕклет. Эпир унпа мухтанатпăр. Ăна ырлăх-сывлăх сунса пултарулăх ĕçĕнче татах та ӳсĕмсем тума сĕнетпĕр. Шкулсенче хамăр тăрăхри паллă çынсемпе тăтăшах тĕл пулни питĕ вырăнлă.

Чăваш юррийĕн çут хĕвелĕ
Тесе калас килет ăна.
Кĕввийĕ унăн вут-хĕлхемлĕ
Тыткăна илет чуна.

**Г. АНДРЕЕВА,**
**Турайри вăтам шкулти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекен.**

Ачасем – пирĕн малашлăх

# Çемьере килĕшӳ хуçалантăр



*Сăн ӳкерчĕкре эсир Хорнуйĕнче пурăнакан Петровсен хисеплĕ çемйине куратăр. Виçĕ ача амăшĕ Эльвира Анатольевна ача садĕнче воспитательте тăрăшать. Çемье пуçĕ Александр Николаевич – В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕн ертӳçин çумĕ. Ноябрь уйăхĕнче вĕсен виççĕмĕш ачи Милана кун çути курчĕ. Çавна май Петровсем ача амăшĕн республика шайĕнчи капиталне тивĕçрĕç.*

**Р. ИЛЛАРИОНОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Çĕнĕлĕхсем медицина пулăшăвĕн пахалăхне ўстереççĕ

Çулталăка пĕтĕмлетсе

***2011–2012 çулсем валли хатĕрленĕ сывлăх сыхлавне модернизацилессин программи вĕçленсе пырать. Патшалăхăн çак программипе усă курнăран пирĕн районта та ырă улшăнусем пулса иртрĕç. Кун пирки тĕплĕнрех районти тĕп больницăн тĕп врачĕпе Владислав ДАНИЛОВПА калаçатпăр.***

**– Владислав Григорьевич, модернизаци программине хутшăнса пирĕн районта мĕнле çĕнĕлĕхсем пулса иртрĕç? Вĕсем медицина услугисен пахалăхне ўстерме пулăшрĕç-и?**

– Малтанах модернизаци виçĕ енлĕн пулса пынине каламалла. Пĕрремĕшĕ – сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсен пурлăх базине пуянлатасси, çĕнетсе çирĕплетесси. Иккĕмĕшĕ информаци технологийĕсене пырса тивет. Виççĕмĕшĕ – медицина пулăшăвĕ памалли стандартсемпе ĕçлесси.

Модернизаци программипе килĕшўллĕн пирĕн районти сывлăх сыхлав сферинче те палăрамлă ырă улшăнусем пулса иртрĕç. Пĕлтĕр акă районти иккĕмĕш номерлĕ больницăра юсав ĕçĕсем турăмăр, çивитти улăштартăмăр. Кунсăр пуçне районти тĕп больницăна пысăк пахалăхлă, хальхи вăхăта тивĕçтерекен медицина оборудованийĕ туянса вырнаçтарнине каламалла. Программăн пĕрремĕш çулĕнче икĕ миллион тенкĕ ытла тăракан маммограф, фибробронхоскоп туянтăмăр. Иккĕмĕш çулĕнче каллех хаклă йышши оборудовани – УЗИ аппаратурине вырнаçтартăмăр. Аукционта укçа-тенкĕ перекетлеме май тупнăран операци тумалли эндоскопи оборудованине те туянтăмăр. Ку аппаратпа хырăмлăхри операцисене пысăккăн касмасăрах тума пулать. Аппаратпа кĕçех ĕçлеме тытăнмалла. Унпа усă курса ĕçлеме пирĕн хирург Хусанта ятарлă вĕренў курсĕнче пулчĕ, хальхи вăхăтра Шупашкарта медицина сестрисем те вĕренеççĕ.

Çавăн пекех модернизаци программине хутшăнса электрокардиографсем вырнаçтартăмăр. Пĕтĕмĕшле вара эпир 7 миллион та 653 пин те 300 тенкĕлĕх оборудовани туяннă.

Паллах çакăн пек пахалăхлă оборудовани пулни медицина услугисен пахалăхне те ўстерме май парать. Мĕншĕн тесен чирлĕ çынна сиплесси тĕрĕс диагноз лартнипе çыхăннă-çке-ха. Ку ĕçре вара çĕнĕ оборудовани пысăк пулăшу кўни куç кĕрет.

**– Модернизацин тепĕр пысăк пайĕ информатизаципе çыхăннă терĕмĕр. Кунта ĕççем мĕнле шайра?**

– Информатизаци валли те укçа-тенкĕ уйăрса панă – пĕр миллион тенкĕ ытла. Унпа усă курса малтанах электронлă регистратура ĕçлеттерсе ятăмăр. Çапла вара е компьютер урлă, е телефонпа шăнкăравласа, е участокри пĕтĕмĕшле практика врачĕ урлă кирлĕ врач патне черете çырăнма пулать. Муркашрисем патне кăна мар, хула больницисене те.

Халĕ больницăри компьютерсене централизацилесси пырать. Кабель çыхăнăвне структурăласа йĕркелессипе Хусанти специалистсем ĕçлеççĕ. Кĕçех амбулатори карттисене те, чир историйĕсене те электронлă майпа туса пырасси ĕçе кĕрĕ.

**– Медицина пулăшăвне парассинче стандартсемпе усă курасси пирки калас пулсан хальлĕхе миçе чире стандартпа сиплетĕр?**

– Хальлĕхе пирĕн больницăра çирĕм ытла чире стандартпа сиплетпĕр. Вĕсем ытларах шыçă чирĕсене, сурансене сиплессипе çыхăннисем. Стандартпа ĕçлесси пĕр-пĕр чир пуррине çирĕплетме палăртнă анализсем парассине, палăртнă консультацисем ирттерессине, çынна палăртнă оборудованипе тĕрĕслессине тата палăртнă эмелсемпе сиплессине пĕлтерет.

Чирсене стандартпа сипленĕшĕн вара Обязательнăй медицина страховани фончĕ укçа уйăрса парать. Икĕ çул хушшинче пурĕ 16 миллион тенкĕ ытла куçарса панă. Стационарта стандартсемпе сипленĕшĕн – 13 миллион тенкĕ ытла, амбулаторинче çапла майпа сипленĕшĕн 3 миллон тенкĕ ытла куçарнă.

Çав сумма чире сиплекенсене ĕç укçи тўлеме тата эмелсемпе тĕрлĕ медицина хатĕрĕсем туянма каять. Стандартпа ĕçленине тишкерсе тăма тĕп больница шайĕнче ятарлă комисси йĕркеленĕ.

Кунсăр пуçне модернизаци программипех 14 çулхи ачасене диспансеризаци ирттерме 353 пин тенкĕ уйăрса панă. Çак сумма 353 (районта çавăн чухлĕ пулнă) ачана диспансеризацие хутшăнтарма май пачĕ.

**– Врачсем çителĕксĕрри – республикăри ытти нумай районта çивĕч тăракан ыйту. Пирĕн районта ку тĕлĕшпе лару-тăру япăх маррине больницăна пулăшу ыйтма пыракансем сиснех ĕнтĕ. Апла пулин те кăçал йышăннă «Земство тухтăрĕ» программăпа Муркашра та çĕнĕ специалистсем ĕçе кўлĕнчĕç.**

– Çапла. Пирĕн республикăра та, Раççейри ытти чылай кĕтесри пекех, ялсенчи больницăсенче врачсем çителĕксĕрри чи çивĕч ыйту шутланнă. Пирĕн ку енĕпе ыттисемпе танлаштарсан лару-тăру яланах чылай лайăхрах пулнă. Сăмахран, пирĕн хирургсем Етĕрне районне кайса та пулăшу панă.

Пирĕн больницăра вара паянхи куна «Земство тухтăрĕ» программăна хутшăнакан 7 врач тăрăшать. Ытларахăшĕ Муркаш районĕнче çуралса ўснисемех. Пурте çамрăк хастар специалистсем.

Çак программăна çитес çула та тăснă. Çапла майпа малашне ялти больницăсене ĕçлеме каякансене кăна мар, ĕçлекенсен поселокĕсене (рабочие поселки тетпĕр) кайма килĕшекен врачсене те пĕрер миллион тенкĕ парса хавхалантарĕç. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса вара вĕсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма май пур. Пирĕн больница пирки калас пулсан çитес çулта та пĕр-икĕ врача ĕçлеме илетпĕр пуль тесе шутлатпăр.

Çапла майпа эпир патшалăх программисене хутшăнни пирĕн пата медицина пулăшăвне ыйтма пыракансемшĕнех темелле. Мĕншĕн тесен эпир хамăрăн ĕç-хĕле медицина пулăшăвĕн пахалăхне ўстерессине тĕпе хурса йĕркелетпĕр.

**– Тавах интереслĕ те анлă калаçушăн.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

# Аннепе юнашар пулмасан

***Никам та ырă пурнăçран Мускава ĕç шыраса каймасть. Çемьене тăрантарас тесе чăваш арçынĕсем инçетри стройкăсенче вăй хунинчен тахçанах тĕлĕнме пăрахрăмăр ĕнтĕ. Анчах та ачисене ура çине тăратас тесе амăшĕсен те çак çулпах кайма тивет.***

Акă Москакасси ял тăрăхĕнчи пĕр амăшĕ виççĕмĕш çул Мускавра ĕçлет. Хăй килте мар чухне çул çитмен ачине кукамăшĕ пăхать. Çак вĕренў çулĕ пуçланиччен хĕр ачине Мускаври шкула вĕренме илсе каяссăн та пулнă-ха вăл. Хĕрне шкула вырнаçтарсан вĕсем кашни кунах юнашар пулĕччĕç те. Анчах хĕр ача: «Е кунта вĕренетĕп, е – урăх ниçта та», – тесе касса татнă.

Çапла халĕ Москакассинчи шкулта вĕренет вăл. Шкултан панă характеристика тăрăх хĕр ача декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне сăлтавсăрах 15 кун сиктернĕ, активлăхпа та палăрсах каймасть, вĕренўре те пĕтĕмпех йĕркеллĕ мар. Кукамăшĕ каланине пур чухне хăлхана та чикмест пулсан, амăшĕ каланине те шута хурасшăн марри палăрчĕ хĕр ачара. Район администрацийĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен тата вĕсен прависене хўтĕлекен комиссин иртнĕ ларăвĕнче «паллашма» тўр килчĕ унпа.

Амăшĕ хĕр ачи патне яланах шăнкăравласа тăрать. Анчах та тепĕр чух хĕр ачан унăн сассине те илтес килми пулать-ши – телефона сўнтерет. Хăйсен пурнăçĕпе пĕрмай интересленсе тăракансене юратмаççĕ çав çамрăксем. Хăйсене ытла та васкаса аслисен ретне тăратаççĕ... Нумай чух вара ырă ĕçпе мар, пирус туртнипе, эрех-сăра ĕçнипе.

Акă 15 çулхи хĕр ача пирки те полици сотрудникĕсен протокол çырма тивнĕ – пĕлĕшĕсемпе пĕрле хĕр ача сăра ĕçнĕмĕн. Çак лару-тăру пирки пĕлсен вара амăшĕ Мускавран тўрех киле вĕçтерсе çитнĕ.

Ĕç мĕнле пулнине тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлес тесе чылай ыйту пачĕç комисси членĕсем. Кăлăхах. Хĕр ача пачах та калаçасшăн пулмарĕ, шăл шурри те кăтартмарĕ. Пĕр вĕçĕм таçта айккине пăхса тăнăран, комисси членĕсем хăйне ырă сунса каланине те «илтмерĕ» пулас.

– Аннў сана йĕркеллĕ ўстерес, тутлă çитерес, хитре тăхăнтартас тесе нумайрах укçа ĕçлесе илме Мускава тухса кайнă. Çемье тăнăçлăхĕ пултăр тесе тăрăшать вăл. Сана хытă юратнăран çапла тума тивнĕ унăн. Халĕ вара эсĕ административлă йĕркене пăснăшăн саккунпа килĕшўлĕн аннўне штраф пама тивет, тепĕр майлă каласан – сана юратнăшăн, – комисси членĕсен çак сăмахĕсем витĕмлĕ пулчĕç-ши – хĕр ачан куçĕ шывланчĕ.

Тен пĕтĕмпех йĕркеленĕ...

**Н. ДИМИТРИЕВА.**

Шкулчченхи вĕрентў учрежденийĕсенче

# Пĕр-пĕрин çинчен нумай пĕлчĕç



